# АЧАСЕН ПУЛТАРУЛĔХ,

❂ Отличниксен слечĕ

## ПУЛТАРУЛЛИСЕНЕ ПАЛĂРТРĔÇ

**Апрелĕн 20-мĕшĕнче Кÿкеçри лицейре районти шкулсенче вĕренекен отличниксен йăлана кĕнĕ слечĕ иртрĕ. Ăна чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я.Яковлев çуралнăранпа 157 çул çитнине, Аслă Çĕнтерÿ 60 çул тултарнине халалланă.**

Вĕрентÿ отличникĕсем, районта, республикăра тĕрлĕ предметпа иртнĕ олимпиада призерĕсем, çамрăксен творчествин тата ача-пăча смотр-конкурс çĕнтерÿçисем, район спорт-сменĕсем чи малтанах район администрацийĕн вĕрентÿ управленийĕн начальникĕ Г.В.Николаев вĕрентÿ тăрăмĕ çинчен тĕплĕн паллаштарнине итлерĕç. Администраци пултаруллă вĕренекенсене куçран вĕçертмест. Район администраци пуçлăхĕн çумĕ - социаллă хÿтлĕх пай ертÿçи А.А.Константинов шăпах вĕсене Грамота тата укçан премипе пачĕ. Хальхинче пысăк хисепе Тутаркассинчи шкулта 9-мĕш класра вĕренекен Дмитрий Васильев, 10-мĕш класа çÿрекен Любовь Данилова, Кÿкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулта 10 класра пĕлÿ пухакан Антонина Мясникова, Кÿкеçри лицее 11-мĕш класа çÿрекен Ольга Семенова, Татьяна Никитина, Анна Урванова, кунтах 10-мĕш класра вĕренекен Андрей Львов, Дмитрий Михеев, Руслан Трофимов, Тренккасси шкулĕн ятне çÿле çĕклекен, 9-мĕш класра ăс пухакан Дмитрий Павлов, Шăмăш шкулне 11-мĕш класа çÿрекен Анастасия Антонова, Кÿкеçри ача-пăча спорт шкулĕн воспитанникĕ, лицейре 3-мĕш класра пĕлĕвне ÿстерекен Денис Ильин тивĕçрĕç. Асăннă вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем вара вĕренÿпе спортра лайăх кăтартупа палăрнă ачасем çитĕнтернĕшĕн Тав çырăвне тивĕçрĕç. Маттур ачасем, ахальтен вĕсен ятне суйласа илмен ĕнтĕ. Акă Антонина районта иртнĕ олимпиадăсене пур предметпа та тенĕ пекех хутшăннă, вĕсенчен 5-шĕнче - призер. Мĕнле савăнмăлла ку çитĕнÿпе. Оля вара республикăра олимпиадăра кăçал икĕ хутчен - биологипе, экологипе - пирĕн район чысне хÿтĕлерĕ. Иккĕшĕнче те малти вырăнсем. Денис 3-мĕш класа çеç çÿретха, çапах, çитĕнĕвĕсем - пысăк. Тĕрлĕ первенствăра çĕнтернĕшĕн панă 8 медаль унăн кăкăрне илем кÿрет. Ыттисен те çитĕнĕвĕсем палăрмăлă.





Кăçал отличниксен пултарулăхĕпе Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем те паллашрĕç. РОНО инспекторĕ пулнă В.Е.Марасанов 17 çулхи çамрăксем те тăхланă çумăр айне кĕни çинчен каланине вĕренекенсем тимлĕн итлерĕç. Шăпах çак кун, апрелĕн 20-мĕшĕнче 1945 çулта, Берлина штурмлама пуçланă. Унта Василий Ефимович та хутшăннă.

Торжествăлла пай хыççăн сцена çине çамрăк артистсем тухрĕç. Çĕнтерÿ 60 çул çитнине халалласа ирттернĕ «Чĕре астăвăмĕ» ача-пăча пултарулăх фестивалĕн гала-концерчĕ куракансене хăй ытамне илчĕ. Л.И.Шайманова ертсе пыракан Çатра-Хочехмат шкулĕн хорĕ «По весеннему раздолью» юрри, Р.Б.Аливанцева хатĕрленĕ Кÿкеçри ача-пăча центрĕнчи «Ракурс» ташă студийĕн «Синий платочек» ташши, Е.И.Кузьмина ертсе пыракан Карачурари шкулти вокал ансамблĕн «Облака» юрри пурне те килĕшрĕ. Кÿкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекен О.Кириллова М.Джалилĕн «Праздник матери» сăввине, Кÿкеçри лицейре пĕлÿ пухакан Е.Шутова Е.Благининан «Папе на фронт» сăввине чуна пырса тивмелле вуларĕç. Вăрман-Çĕктер шкулĕнче вĕренекен А.Поляков «Солдатушки - бравы ребятушки» юрра хăй купăспа каласа шăрантарсан темччен алă çупрĕç куракансем. Тренккасси, Ишлей, Карачура шкулĕсенче вĕренекенсем ташша ăста пулни те курăнчĕ. Ача-пăча центрĕнчи вокал ушкăнĕ «Журавли» юрра çÿллĕ шайра шăрантарчĕ. Кÿкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекен Анна Шереметова «Казачья песня» юррипе каччăсен чĕрине тыткăнларĕ.

Слет вĕçлениччен курав ĕçлерĕ. Кăçал, ытти çулпа танлаштарсан хăйсен ĕçне нумайăшĕ тăратнă. Жюри Ишлейри «Сотвори сама», ача-пăча центрĕнчи «Всеумейка», «Волшебные петельки», «Художественная вышивка», Тренккассинчи «Резьба по дереву», «Живопись», Çĕньялти «Древесная пластика». Кÿкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти «Техническое творчество», лицейри 3 «б» класăн Вышивка» кружоксем çĕнтернине палăртрĕ.



❂ Ачасен пултарулĕхĕпе аслисем те кăмăллă пулчĕç.
❂ Тренккассисем сцена çинче.
❂ «Сотвори сама» кружока çÿрекенсен ĕçĕсем.

**Сцена çинче ачасем ветерансене хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. Акă, ертсе пыракан Кÿкеçри лицейре, 7"в" класра вĕренекен ятне каларĕ. Вăрăм çивĕтлĕ хĕрача «Атте патне фронта» сăвва вулама пуçларĕ.**

## «МАТТУР, ПУЛТАРАТЬ»

Евгения Шутова çинчен лицейре вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем ырăпа асăннине малтан та илтнĕччĕ-ха. Унăн ячĕ нумай пулмасть «Тăван Енре» те пичетленнĕччĕ - Женя районта иртнĕ «Çулсем иртнĕ май сан пата çыру çыратăп» конкурсра I степеньлĕ Диплома тивĕçнĕччĕ. Редакцинче хаçат илсе тăракан, ветерансен хорне çÿрекен кинемей вĕсене валли вĕренекенсем «Салтак пуканийĕ» юмах лартса панине, унта пĕр пĕчĕк хĕрача мăнук рольне чуна тыткăна илмелле выляннине каласа пани те асрах. Çак кун вара талантлă хĕрача çинчен ахальтен мар хавхаланса каласа панине хам куçпа курса ĕнентĕм. Вăрçа тухса кайнă ашшĕ патне çырнă çырăва Женя интонаципе, чунтан вулама пуçласан залра шăплăх хуçаланчĕ. Пĕчĕк хĕрача çепĕççĕн, чĕререн тухакан сăмахсене куççуль кăлармалла халăх патне илсе çитерме пултарни пурне те тĕлĕнтерчĕ. Залра ларакан кусĕсене шăлакан кĕмĕл çÿçлĕ ветеран-салтаксенчен вăрахчен «Маттур, пултарать» тени илтĕнчĕ.

«Вырăс литературипе урок иртермелле килсе тухрĕ. Ачасен сăвва палăртуллă вуламаллаччĕ. Евгения вулама пуçласан шăпăрт итлесе лартăм. Вăт, талант тени ăçта пытаннă вăл. Çак урок хыççăн эпир ăна районта иртекен вулакансен конкурсне хатĕрлерĕмĕр. Мĕн тетĕр, иккĕмĕш вырăн. Кăçал апрелĕн 17-мĕшĕнче иртнĕ ку конкурсра пĕрремĕш вырăна тухрĕ»,- каласа парать директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Л.В.Порфирьева.



Любовь Вениаминовна каланă тăрăх, поселок администрацине пĕр-пĕр кунпа саламламалла, е кам умĕнче те пулин тухса калаçмалла - лицей ертÿçисем тÿрех Женьăна суйласа илеççĕ, мĕншĕн тесен вăл шанăçа тÿрре кăларатех. «Класра малта пырать, шкул активĕнче те ун хушамачĕ пур. Пур ĕçе те тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Сочинени çырассипе малтисенчен пĕри, унăн ĕçне кăмăлтан вулатăн. Пĕр-пĕр урока тĕрлĕ сăлтавпа сиктермелле килсе тухрĕ пулсан - ÿкĕнет. Ахальтен им, «отличница». Пĕр сăмахпа - пысăк чунлă çын вăл»,- терĕç ун çинчен ытти вĕрентекенсем. Женьăна пĕрре çеç мар 7 «в» класран «а» класа куçма ыйтнă, (лицейре вĕренекенсене те, ыттисене те «а» ыттисенчен мĕнпе уйрăлнине ăнлантарма кирлĕ мар) çавах хĕрача ку утăма тума шутламасть-ха. «Пултараймасан»,- пулчĕ кĕске хурав.

Çут çанталăка, чĕрчунсене юратакан Е.Шутова вырăс чĕлхи, истори, биологи урокĕсене хавхаланса çÿрет. Пушă вăхăтра гитара çинче выляма юратать. Хăйĕн çитĕнĕвĕшĕн Женя пур учителе те тав тăвать, Г.П.Самарина класс ертÿçине, биологи учительне Р.А.Абрамовăна, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумне Л.В.Порфирьевăна пушшех те.

Женя паян 7-мĕш класа çеç çÿрет-ха, апла пулин те пултарулăхĕпе ыттисенчен уйрăлма та ĕлкĕрчĕ. Нумай пулмасть вĕрентекенсене тепĕр енпе тĕлĕнтернĕ вăл. Женя çырнă 40 минута тăсăлакан «Кĕрхи патшалăхри мыскара» юмах пурне те килĕшнĕ.

Тепĕр ик çултан унăн класĕ те районта тĕрлĕ предметпа иртекен олимпиадăсене хутшăнма пуçлать. Евгения Шутова хушаматне унта курасса шанса тăратăп.

❂ **Лайăх паллăпа вĕренекен Е.ШУТОВА.**

❂ Сăвă сĕвеме

### СИСĔНМЕСĔР ХĔЛ ИРТЕТ

*Сисĕнмесĕр хĕл иртет,*
*Васкаса юр ирĕлет.*
*Акă çитрĕ çуркунне,*
*Кунĕсем ытла хитре.*

*Шыв хăй юррине юрлать,*
*Çырмана юхса каять.*
*Йывăç çулçă кăларать,*
*Шăнкăрч юрă шăратать.*

*Владимир ПЕТРОВ,*
*Атайкасси шкулĕ.*

### ÇУРХИ КУН

*Сисĕнмесĕр*
*хĕл те иртрĕ,*
*Васкаса çуркунне çитрĕ.*
*Çитрĕç ĕнтĕ ăш кунсем,*
*Юр юрлаççĕ кайăксем.*

*Симĕсленчĕç вар,*
*хирсем,*
*Улăхсемпе çарансем.*
*Аслă вăрман чĕрĕлет,*
*Илемĕпе илĕртет.*

*Çĕмĕрт çеçки çурăлать,*
*Питĕ хитрен курăнать.*
*Вăштăр-вăштăр*
*çил вĕрет,*
*Йывăç тăррине силлет.*

*Таçта, шалта, вăрманта,*
*Куккук сасси илтĕнет.*
*Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен*
*Ырă шăрши сарăлать.*

*Света ПЕТРОВА,*
*Атайкасси шкулĕ.*

## ШКУЛТА - ЧИ МАЛТИСЕМ

«С.Филипповпа В.Романова иккĕшĕ те 8-мĕш класра вĕренеççĕ. Сергей спортпа туслă, пĕрре мар шкул, район ятне çÿле çĕкленĕ. Вера хушаматне вырăнта иртекен пур мероприятинче тенĕ пекех курма пулать»,- терĕ ачасем çинчен ыйтсан Кÿкеçри шкул-интернат» директорĕ Г.В.Ильин.

С.О.Филиппов Красноармейски районĕнчи Çырмапуç ялĕнчен. 4 çул ку шкулта пĕлÿ пухать. Пĕчĕкренех ăмăртусене хутшăнать. Пиччĕшĕ Саша сывă пурнăç йĕркине тытса пыни спорта явăçтарнă та ăна. Пиччĕшĕ кунтан вĕренсе тухса кайиччен вĕсем иккĕшĕ интернатри çемьесен хушшинчи ăмăртура чупассипе 1-мĕш вырăна 2 хутчен умлă-хыçлă никама та паман. Çăмăл атлетика енĕпе шкул-интернатра иртекен соревнованисенче пĕри те Сергея çĕнтереймеççĕ. Хăвăрт утасси, çуран, йĕлтĕрпе чупасси, турник çинче туртăнасси - пĕрмай С.Филиппов призер. Грамотăсемпе тав çырăвне шутласа та тухаймăн. Ирĕклĕ майпа кĕрешессипе вара Сергей интернат чысне районта çулсерен иртекен турнирта хÿтĕлет. Хăйпе пĕр тантăшсем хушшинче çĕр çине çĕклесе çапса ăна парăнтарни пулман-ха. Кĕрешÿ вăрттăнлăхĕпе паллаштаракан ача çулсерен районта 1-мĕш вырăна тухса пыни О.М.Иванов тренер чунне те хăпартлантарать. Район çĕнтерÿçи республикăри ăмăртусене те пĕрре мар хутшăннă. Нумай чухне унта та призлă вырăнсем. «Хама пур енĕпе те тĕрĕслесе пăхасшăн. «Наци кросне» те, «Раççей йĕлтĕр йĕрне» те хутшăннă. Ман шутпа, пур ачан та, арçын ачасен пушшех спортпа туслă пулмалла. Вăл сывлăха çирĕплетнисĕр пуçне кайран та кирлĕ пулĕ. Чи кирли вара - такамшăн ăмăртусене хутшăнса çĕнтерес тесе тăрăшмалла мар, хăвăншăн»,- тет каччă.

(Вĕçĕ 4-мĕш страницăра.)

❂ Страницăна А.СУСМЕТ хатĕрленĕ.

